# Ҫĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаҫачĕ — 1944 ҫулхи ҫу уйӑхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

48 (8615) № * Юнкун, утӑ (июль) уйӑхĕн 4-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Республикӑра

## Муркашсем – ҫĕнтерӳҫĕсем

А.Г. Николаев космонавт ячĕллĕ кубока ҫĕнсе илессишĕн 2005 ҫултанпа спорт тата спортӑн хушма енĕсемпе Чӑваш Республикинчи шкул ачисен спартакиади иртет.

Ҫак кунсенче 2017 – 2018 ҫулсенчи вĕренӳ ҫулĕнчи спартакиадӑн результачĕсене пĕлтернĕ. Спартакиадӑна пурĕ 25 районпа хулари 95 команда хутшӑннӑ. Спартакиада шучĕпе республика шайĕнчи 14 фестиваль иртнĕ: «Сывлӑш ҫĕленĕсем», автомодель, авиамодель, ракета моделĕсен, судомодель ӑмӑртӑвĕсем, картинг, ҫамрӑк ҫул-йĕр инспекторĕсен тата пушарнӑйсен слечĕсем.

Зачета кĕртнĕ ҫак 8 енпе иртнĕ ӑмӑртусенче Муркаш районĕ 1-мĕш, Ҫĕнĕ Шупашкар хули 2-мĕш, Комсомольски районĕ 3-мĕш вырӑна тухнине пĕлтернĕ. Спартакиадӑн куҫса ҫӳрекен кубокĕ Муркаш районĕнчех юлать.

**Хамӑр инф.**

Ҫурт-йĕр

## Юсав ирттерекенсем паллӑ

Нумай хваттерлĕ ҫуртсенчи пĕрлехи пурлӑха тĕплĕ юсамалли республика программине пурнӑҫланӑ май, Муркаш районĕнче кӑҫал тĕплĕ юсав ĕҫĕсене ирттерекен подрядчиксене палӑртнӑ.

Ҫапла Мӑн Сĕнтĕрти Новая урамри 5 ҫурта тĕплĕ юсама «Республиканский фонд капитального ремонта многоквартирных домов» коммерциллĕ мар организаци «СК «Виком» тулли мар яваплӑхлӑ пĕрлешӳпе 60 кунлӑха пурĕ 569 пин ытла тенкĕлĕх килĕшӳ тунӑ.

Муркашри Восточная урамри 6 ҫурта тĕплĕ юсама «Республиканский фонд капитального ремонта многоквартирных домов» коммерциллĕ мар организаци «Калита» тулли мар яваплӑхлӑ пĕрлешӳпе 60 кунлӑха пурĕ 421 пин ытла тенкĕлĕх килĕшӳ тунӑ.

Муркашри Октябре 50 ҫул урамри 40 ҫурта тĕплĕ юсама «Республиканский фонд капитального ремонта многоквартирных домов» коммерциллĕ мар организаци акционерсен «Сенкер» уҫӑ пĕрлешĕвĕпе 50 кунлӑха пурĕ 301 пин ытла тенкĕлĕх килĕшӳ тунӑ.

Муркашри Октябре 50 ҫул урамри 42 ҫурта тĕплĕ юсама «Республиканский фонд капитального ремонта многоквартирных домов» коммерциллĕ мар организаци «Калита» тулли мар яваплӑхлӑ пĕрлешӳпе 60 кунлӑха пурĕ 827 пин ытла тенкĕлĕх килĕшӳ тунӑ.

**Муркаш район администрацийĕн капиталлӑ строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕ.**






Ҫамрӑксен уявĕнчен

## Ҫамрӑксенче – вӑй-хал, ӑнтӑлу



*Юлашки ҫулсенче районти ялсен сӑн-сӑпачĕ тĕпрен улшӑнчĕ. Ҫĕнĕ ҫуртсем тата вĕсене хӑвӑрт тума пулӑшакан конструкцисем ял ҫыннишĕн ҫĕнĕлĕх мар ĕнтĕ. Ҫакна алла илнисен пурнӑҫ условийĕсем те ҫур ĕмĕр каяллахинчен пачах уйрӑлса тӑраҫҫĕ. Пурнӑҫ ҫĕнĕрен ҫĕннине ыйтать. Унран юлмасӑр пурӑнма тӑрӑшакан ял ҫыннишĕн, уйрӑмах ҫамрӑксемшĕн, паян савӑнмалла кӑна. Хамӑрӑн кĕске калаҫура эсир сӑн ӳкерчĕкре куракан пикесем те ҫавнах ҫирĕплетрĕҫ. Вĕсем (сулахайран сылтӑмалла): район администрацийĕн капиталлӑ строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕн тĕп эксперт специалисчĕ Ольга Сандимировӑпа асӑннӑ пай пуҫлӑхĕн ҫумĕ Олеся Валежникова. Иртнĕ эрнекун Муркашра иртнĕ ҫамрӑксен уявĕнче Ольга Владимировнӑна ĕҫре мал туртӑмлӑ пулнӑшӑн район администрацийĕн Тав хучĕпе, Олеся Анатольевнӑна вара ĕҫри ӳсĕмсемшĕн район администрацийĕн Хисеп грамотипе чысларĕҫ.*

**Ҫамрӑксен уявĕ епле иртнипе хаҫатӑн 3-мĕш страницинче тĕплĕнрех вуласа паллашма пултаратӑр.**

**(Вĕҫĕ 3 стр.)**

Ҫырӑнтару – 2018

## Хаҫат ҫырӑнма васкӑр

**«Ҫĕнтерӳ ялавĕ» хаҫата август уйӑхĕнчен илсе тӑма ҫырӑнтараҫҫĕ. Кĕрхи-хĕллехи каҫсенче райхаҫата вулас тесен почтальонпа тĕл пулма васкӑр.**

**Район хаҫатне альтернатива мелĕпе ҫырӑнас текенсен редакцине паспортпа килмелле.**

Районта

## Ҫул-йĕр хӑтлӑланать

Район администрацийĕн пуҫлӑхĕн ҫумĕ А. Матросов «СМУ» чикĕллĕ яваплӑхлӑ обществӑн представителĕпе Ф. Петровпа тĕл пулнӑ. «Муркаш – Хорнуй – Платкасси» маршрутлӑ автоҫул ҫине ҫитсе курнӑ май унти ĕҫе пуҫӑнас ыйтӑва сӳтсе явнӑ. Подряд организацийĕ асӑннӑ объект ҫине техникӑна куҫарма пуҫланӑ. 9 километр ҫинчи ĕҫе пурнӑҫлама 40 миллион та 581 пин тенкĕ укҫа уйӑрма палӑртнӑ. «СМУ» ООО федерацин «Хӑрушлӑхсӑр тата пахалӑхлӑ ҫул-йĕр» программи шайĕнче ытти ҫул ҫинче те ĕҫлет. Унччен вĕсем «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» маршрутлӑ ҫулӑн 1,6 километр тӑршшĕ татӑка юсанӑ, ҫӑва патне пымалли ҫула та хӑтлӑх кĕртнĕ. Унти ĕҫ валли пĕтĕмпе 7 миллион та 785 тенкĕ укҫа уйӑрнӑ. Алексей Матросов ҫак объектри ĕҫпе те паллашнӑ.

## Ĕҫ вырӑнĕсем пур

Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа ҫак тапхӑр тĕлне ĕҫпе тивĕҫтерекен центра 628 ҫын хӑйĕн ку тĕлĕшри ыйтӑвĕпе пынӑ, 50 ҫынна ĕҫсĕррисен шутне официаллӑ регистрациленĕ. Экономикӑра вӑй хуракансен йышĕпе шутласан, ĕҫсĕрлĕх шайĕ 0,28 процентпа танлашать.

Ҫак тапхӑр тĕлне 36 организаци, предприяти 272 ваканси пуррине пĕлтернĕ. Ҫулталӑк пуҫланнӑранпа 575 ҫынна ĕҫпе тивĕҫтернĕ, вӑл шутра 38 ҫынна обществӑлла ĕҫе явӑҫтарнӑ, 14 ҫултан пуҫласа 18 ҫулчченхи 358 ҫамрӑка вӑхӑтлӑ ĕҫлеме май туса панӑ, 30 ҫынна професси пĕлĕвне илме, квалификацие ӳстерме пулӑшнӑ.

## Кулленех ĕҫре

Выльӑх апатне хĕл валли ытлӑ-ҫитлĕ хатĕрлеме пĕрлешӳллĕ хуҫалӑхсемпе хресчен (фермер) хуҫалӑхĕсен нумай ҫул ӳсекен курӑксене пĕтĕмпе 6734 гектар, пĕр ҫул ӳсекен курӑксене 888 гектар ҫулса илмелле. Районти хуҫалӑхсен ĕҫченĕсем ĕнерхи куна нумай ҫул ӳсекен курӑксене пурĕ 3863 гектар (57 процент) ҫулнӑ. Ку ĕҫе Е. Андреев яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативĕнче, «Гея» чикĕллĕ яваплӑхлӑ обществӑра тата А. Мерловпа И. Скворцов ертсе пыракан хресчен (фермер) хуҫалӑхĕсенче вĕҫленĕ.

## Утӑ – ҫурринчен ытла

Район администрацийĕн экономикӑпа АПК аталанӑвĕн пайне вырӑнсенчен тӑрӑтнӑ оперативлӑ кӑтартусене пӑхсан, ҫĕр ĕҫченĕ пур харпӑрлӑх тытӑмлӑ хуҫалӑхсенче те утӑ хатĕрлессипе сенаж хывассине кунсерен ӳстерсе пырать. Утӑ уйӑхĕн 3-мĕшĕ тĕлне районти ял хуҫалӑх предприятийĕсем пĕтĕмпе 4405 тонна (58,4 процент) курӑк типĕтсе управа пухса хунӑ. Суворов яч. хис., Чкалов яч. хис. ял хуҫалӑх производство кооперативĕсемпе «Гея» чикĕллĕ яваплӑхлӑ обществӑра утта 100 – 80 процент янтӑлама ĕлкĕрнĕ. Сенаж 14623 тонна хатĕрлемелле пулсан, ӑна пурĕ 3950 тонна янтӑланӑ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА, А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Саламлатпăр



Пирĕн юратнă та хисеплĕ çыннăмăра – Шаптак Муркашра пурăнакан **Светлана Борисовна СЕРГЕЕВĂНА** илемлĕ юбилейпа ăшшăн саламлатпăр.

Эсĕ пирĕншĕн чи çывăх та чи хаклă çын. Эс пурри – пирĕн телей, савăнăç, пуянлăх. Сана çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, тулăх пурнăç, иксĕлми телей, ăнăçу сунатпăр. Килекен кашни куну ырлăхпа, савăнăçпа, çутă ĕмĕтсемпе тултăр.

Сăнра çуталтăр йăл куллу,
Телейлĕ пултăр кун-çулу.
Эс хаклă ылтăн-кĕмĕлтен –
Сана саватпăр чĕререн.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, йăмăкĕ тата шăллĕн çемйисем, хунямăшĕ.**

Юратнă аннене – Хорнуйĕнче пурăнакан **Алевтина Пименовна БОРИСОВĂНА** 70 çул тултарнă ятпа ăшшăн саламлатпăр. Эсĕ пурришĕн эпир савăнатпăр, санпа мухтанатпăр. Эсĕ пире ĕçлеме те, пурăнма та хавхалантаратăн, ялан пур енĕпе ырă сĕнÿпе те пулăшатăн. Сана вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх сунатпăр. Малашне те тăван кил ăшшине упрама Турă сана иксĕлми вăй-хал патăр.



**Салампа: хĕрĕсемпе кĕрÿшĕсем, ывăлĕпе кинĕ, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕсем.**

Пăсăрман ялĕнче пурăнакан пирĕн хаклăран та хаклă **Валентина Михайловнăпа Владимир Афанасьевич МАКСИМОВСЕНЕ** ылтăн туй ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Тавах сире эсир пурришĕн, çемье ăшши пулнишĕн. Ырлăх-сывлăх, иксĕлми вăй-хал, телей, вăрăм кун-çул сунатпăр, чир-чĕр сирĕнтен пăрăнса ирттĕр. Пире савăнтарса пурăнма Турри сире тата нумай çул усратăр.



**Пысăк салампа: 3 хĕрĕ, 3 кĕрÿшĕ, 12 мăнукĕ, мăнукĕсем çемйисемпе, 3 кĕçĕн мăнукĕ.**

Нимĕнрен те хаклăрах аннене, мамака, аппана, йăмăка, хунямана – Çатракасси ялĕнче пурăнакан **Людмила Тимофеевна СМИРНОВĂНА** 70 çулхи юбилей ячĕпе чĕререн саламлатпăр. Ватлăхра ырă кунпа, хуйхă-суйхăсăр, чир-чĕрпе асапланмасăр, мăнуксемпе савăнса пурăнма ырлăх, çирĕп сывлăх сунатпăр.



**Саламлаканĕсем: амăшĕ, юратнă мăшăрĕ, 3 ачи, 7 мăнукĕ, 3 кĕçĕн мăнукĕ, пиччĕшĕ, йăмăкĕ, шăллĕ тата ытти юратнă тăванĕ.**

Республикăра

## Шупашкарсен те Эйфель башни пулать

Çакăн пирки pg21 портал пĕлтерет. Çĕнĕ башня «Объединенное железнодорожное хозяйство» пĕрлешÿ территорийĕнче Çеттуй Елена часавайĕн çывăхĕнче пуласси паллă.

Çĕнĕ объектăн çÿллĕшĕ 20 метра яхăн пулмалла. Башня никĕсне туса лартнă ĕнтĕ. Объекта август уйăхĕнче Шупашкар хула кунĕнче уçма палăртнă.

Башньăна иллюминаци системипе илемлетессине пĕлтернĕ. Башня тăвакансем çак арт-объект хула çыннисене те, хăнасене те килĕшессе шанаççĕ.

**Хамăр инф.**

Патриот воспитанийĕ

# Пур çавăн пек професси

Хальхи вăхăтра вăтам шкултан вĕренсе тухакансем валли пур çул та уçă. Ытларахăшĕ вара малалла вĕренсе аслă е ятарлă пĕлÿ илме, килĕшекен професси суйласа илсе пурнăç сулĕ çине тăма ĕмĕтленет. Çакна ăнланмалла та. Паянхи пурнăçра кирек епле ĕçре те ăслă-тăнлă, анлă тавракурăмлă специалистсем кирлĕ. Çамрăкла вĕреннине вара нимĕн те çитмест.

Çĕр-çĕр професси хушшинче çар пурнăçне суйласа илекенсем – контрактпа çар службине малалла тăсакансем, тĕрлĕрен çар училищинчен офицера вĕренсе тухса çĕршыв хÿтĕлевçин ĕçне кÿлĕнекенсем пирки уйрăм чарăнса тăрас килет. Ахальтен каламан ĕнтĕ кун пеккисем пирки: пур çавăн пек професси – çĕршыва хÿтĕлесси.

Чăн-чăн арçынсем темелле пулĕ кун пеккисене. Пирĕн районти яш-кĕрĕм хушшинче те çар пурнăçне суйласа илекенсем сахал мар пулни савăнтарать. Çар службине тивĕçлипе ирттерсе вĕсем ентешсен, тăван ен, республика чыс-хисепне çĕклеççĕ.

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатĕнче июнĕн 27-мĕшĕнче тĕл пулу иртрĕ. Çав кун кунта кăçал шкултан вĕренсе тухнă хыççăн çар комиссариачĕ урлă аслă çар училищисене вĕренме кайма хатĕрленекенсем тата вĕсен ашшĕ-амăшĕ пухăнчĕç.

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссарĕ Владимир Казаков çĕршыв хÿтĕлевçин профессине суйласа илме кăмăл тунисене тав сăмахĕ каларĕ, экзаменсене ăнăçу сунчĕ, кирек епле йывăрлăх умĕнче те пуç усмалла маррине асăрхаттарчĕ. Вĕсене çĕнтерсе пырса палăртнă тĕллев патне ăнтăлас пулать. Ун чухне пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулать. Йывăрлăхсем тенĕрен, вĕсемсĕрех мар ĕнтĕ. Анчах та çирĕп кăмăл-туйăмлă, йывăрлăхсене çĕнтерме хăнăхнă çын кăна чăн-чăн Раççей çар офицерĕ пулайрать. Кун пек командирпа салтаксене те шанчăклă.

Владимир Казаков каласа панă тăрăх, аслă çар училищисене вĕренме каяс кăмăллисем малтанласа 19-ăн пулнă. Каярахпа вĕсенчен виççĕшĕ хăйсен шухăш-кăмăлĕ улшăнни пирки пĕлтернĕ, заявленисене каялла илме кăмăл тунă. Çакă тĕрĕс те пулĕ. Мĕншĕн тесен пулас офицерăн пуçра шухăш-туйăм вылямалла мар, кăмăл çирĕплĕхĕ халех пулмалла.

Çавна та каласа хăварас пулать. Яшсемпе пĕрлех çар службине суйласа илекенсем хушшинче хĕрсем пулни те аван. Вĕсем иккĕн. Пĕри Санкт-Петербургри çыхăну çар академине, тепри çавăнти медицина çар академине суйласа илнĕ. Яшсенчен ытларахăшĕ вара Мускаври тата Новосибирскри аслă çар команда училищисенче, Рязаньри аслă сывлăш-десант команда училищинче, Воронежри сывлăш çар вăйĕсен академийĕнче т. ыт. те вĕренме кăмăл тунă.

Çар училищисен абитуриенчĕсемпе тата вĕсен ашшĕ-амăшĕпе йĕркеленĕ тĕл пулăва çар училищисенчен вĕренсе тухнă яшсене те чĕннĕ. Кÿршĕ Элĕк район каччи Станислав Егоров лейтенант тата пирĕн районти Турай ял тăрăхĕнчи Уйкас Турайри Сергей Васильев лейтенант пулас офицерсене экзаменсем тытассин, вĕренÿ йĕркипе паллаштарчĕç. Станислав Рязаньри аслă сывлăш-десант команда училищинчен, Сергей вара Мускаври çар училищинчен вĕренсе тухса экзаменсене ăнăçлă тытнă.

Çамрăк офицерсем патне çар çыннин ĕçне суйласа илес текенсен кăна мар, вĕсен ашшĕ-амăшĕн те ыйтусем сахал мар пулчĕç: «Вĕренме кĕме экзаменсем йывăр-и? Апатлану енчен еплерех? Кĕсье телефонĕпе усă курма юрать-и? Экзаменсем тытма кайма çула тухнă чухне пĕрле мĕн-мĕн илмелле?» Пур ыйту çине те тулли те тĕплĕ хурав илме май пулчĕ çав кун.

Çамрăк офицерсем каласа панинчен кашниех çакна ăша хывса хăварчĕ пулĕ: офицер пулас текенĕн чи малтанах кăмăл çирĕплĕхĕ, çине тăма пултарни кирлĕ. Сын хĕтĕртнипе е такам хушнипе офицер пулма май çук. Чăннипех офицер пулас текене вара никам та чарса тăма пултараймасть. Ахальтен мар ĕнтĕ конкурспа пĕрремĕш çулне вĕренме кĕрейменнисем хушшинче иккĕмĕш е хыççăнхи çул вĕренме кĕнисем те тĕл пулаççĕ. Сывлăх пирки те манмалла мар, спортпа туслă пулмалла, сывă пурнăç йĕркине тытса пыни пĕлтерĕшлĕ.

Станиславпа Сергей каласа панă тăрăх, дисциплинăна хăнăхас пулать. Харпăр хăйне лайăх енчен кăтартма тăрăшмалла. Ырă ята çухатма вăхăт нумай кирлĕ мар. Кайран вара ăна таврăрма питех те йывăр пулать.

Çар училищисене вĕренме каяс кăмăллисене телейлĕ çул, умри экзаменсенче ăнăçу сунса район администрацийĕн çул çитменнисемпе ĕçлекен комиссийĕн тĕп эксперт специалисчĕ Александр Данилов сăмах каларĕ, мĕн шухăшланисене пурнăçа кĕртсе пыма çирĕп кăмăл сĕнчĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Шалти ĕçсен пайĕнче

# Хăрушсăрлăх ыйтăвĕсене сÿтсе яврĕç



Район территорийĕнче çул-йĕр хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтересси тата ачасене хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси – çак икĕ çивĕч ыйтăва РФ Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ çумĕнчи общество канашĕн черетлĕ ларăвĕнче тишкерчĕç.

Патшалăх çул-йĕр инспекцийĕн районти тĕп инспекторĕ Сергей Иванов Муркаш район территорийĕнчи çулсем çинче хăрушсăрлăхпа тивĕçтересси çулла уйрăмах çивĕччине палăртрĕ. Федераци пĕлтерĕшлĕ М7 трассăпа вăтамран кунсерен 80 пине яхăн транспорт иртсе çÿрет, çулла – пысăкрах хăвăртлăхпа. Вырăнти пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче вара çуллахи вăхăтра тракторсем, мотоблоксем, скутерсемпе мопедсем йышланаççĕ. Çуллахи вăхăт – ача-пăча лагерĕсенчи кану вăхăчĕ. Çавăнпах çул-йĕр инспекторĕсен Шомик тăрăхĕнче вырнаçнă хула тулашĕнчи сывлăха çирĕплетмелли лагерьсене те çитмелле.

Кăçал çулсем çинче пулса иртнĕ инкексене тишкерсен, суранланнисен шучĕ пысăкланни палăрать. Çавăнпа та общество канашĕн членĕсем çул-йĕр правилисене пăхăнассипе профилактика ĕçне вăйлатма, ялсенчи пухусенче информацие халăх патне çитерме сĕнчĕç.

Иртнĕ канашлура «Гигант» çулĕ хăрушлăх кăларса тăракан çул пулнине палăртнăччĕ. Сергей Иванов каланă тăрăх, çул çинчи хăшпĕр вырăнсене юсама, çул айккисене йĕркене кĕртме предписани çырнă. Хальлĕхе пăтăрмахсене пĕтĕмпех пĕтермен-ха. Çавăнпа та ку ыйтăва контрольтех тытма сĕнчĕç.

Ачасене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессине сÿтсе явнă май, çул çитменнисемпе ĕçлекен подразделени пуçлăхĕ Олег Яковлев пулма пултаракан преступленисене асăрхаттарас тĕллевпе полицейскисем ытларах профилактика мелĕсемпе усă курнине пĕлтерчĕ. Çапла иртнĕ тапхăрта çул çитменнисем тĕлĕшпе, вăл шутра ашшĕ-амăшĕ хăйсен ачисене кирлĕ пек пăхман тĕлĕшпе те, йĕркене пăснă пурĕ 126 факт регистрациленĕ.

Июль – август уйăхĕсенче шкул çумĕнчи лагерьсем ĕçлемеççĕ, ачасем ытларахăшĕ килте, çавна май вĕсен пушă вăхăт та палăрмаллах нумай. Çак вăхăта ачасем мĕнле иртерессине ашшĕ-амăшĕн тимлĕхĕнчен нумай килет. Каникула хуласенчен яла килекен ачасемпе çамрăксем те сахал мар. Апла пулсан килте асăрхаттару калаçăвĕсем пулмаллах. Уйрăмах – пушар тата шыв çинчи хăрушсăрлăх пирки. Акă иртнĕ кунсенче кăна пирĕн республикăра 5–6 çулхи ачасем шыва путса вилнĕ.

Хула тулашĕнчи лагерьсенче канакан ачасем пысăк тимлĕхре пулни паллă, çапах та çул çитменнисемпе ĕçлекен полицейскисем, ытти сотрудник та лагерьсенче кашни кун тенĕ пекех пулаççĕ. Мĕншĕн тесен унта çак вăхăтра тĕрлĕ районти шалти ĕçсен пайĕсенче учетра тăракансем те канаççĕ.

Çавăнпа та общество канашĕн членĕсем шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕпе Владимир Степановпа тата Олег Яковлевпа пĕрле пирĕн район территорийĕнче вырнаçнă хула тулашĕнчи лагерьсене çитсе курчĕç. «Солнышко», «Березка» лагерьсенче тата «Лесная сказка» санаторире пулса кунти условисемпе паллашрĕç. Лагерьсенче хÿтлĕх тата хăрушсăрлăх тĕлĕшĕнчен мĕнле условисем пулнипе кăсăкланчĕç.

«Лесная сказка» санатори, ыттисемпе танлаштарсан, çулталăкĕпех ĕçлет. Санатори ертÿçи Елена Гурьева пур корпуспа та, пур пÿлĕмпе те тĕплĕ паллаштарчĕ. Ачасемпе аслисем валли (çуллахи вăхăтра чирлĕ ачисемпе амăшĕсем те канаççĕ, сипленеççĕ) кунта кил картишĕнче те, пÿлĕмсенче те условисене лайăххатни палăрать – пĕтĕмпех çĕнелсе, илемленсе пырать. Ăста специалистсем пурри тĕрлĕ сиплеве ăнăçлă ирттерме май парать. Ачасем канман вăхăтра вара кунта 50 çултан иртнĕ çынсем те канса сиплеме пултараççĕ: 10 куна 6500 тенкĕ кăна тăкаклама тивет.

Лагерьсенче пуринче те видеокамерăсем пур. Кашни лагерьтех хурал кĕтсе илчĕ. «Солнышко» лагерь ертÿçи Сергей Курмышев, сăмахран, рацие алăран вĕçертмест. Лагерьсенче ачасене хăрушсăрлăхпа тивĕçтерессии çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ. Вожатăйсем те – ятарласа вĕреннисем, алла сертификат илнисем. Лагерьсенче смена интереслĕ иртни палăрать. Апла пулсан учетра тăракан ачасене те лагерьте канни усă кÿрессе шанмалла.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ÿкерчĕкре: «Лесная сказка» санаторире.**

Çамрăксен уявĕнчен

# Çамрăксенче – вăй-хал, ăнтăлу

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**Ыранхи кунпа пурăнакансем çамрăксене тĕрĕс воспитани парса ӳстерессине тĕп вырăнта тытаççĕ. Шăпах вĕсем пирĕн ĕçе малалла тăсаканнисем, ĕмĕтĕмĕрсене пурнăçа кĕртекеннисем, çĕнĕ технологисене алла илсе ăнăçăва кашнин патне çитерекеннисем. Тĕрĕс воспитани парса ӳстернĕ яш-кĕрĕм – паянхи ялсемпе ял хуçалăх предприятийĕсен тăнăç пуласлăхĕ, анлă малашлăхĕ.**

Çунатлă çамрăклăх. Мĕн чухлĕ вăйхал унра, мал туртăмлăх, ыррине пурнăçа кĕртессишĕн ăнтăлни, пĕр-пĕрне вăхăтра пулăшни. Çак сăмахсем районти кашни çамрăках пырса тивеççĕ. Яшкĕрĕм, районта пулсан та, унăн тулашĕнче вăй хурсан та, тăван ен илемĕпе хăчĕшĕн хăйĕнчен мĕн килнине йăлтах пурнăçлама тăрăшать. Çакăнта çирĕпленет те ĕнтĕ Муркаш ен ячĕпе унăн экономика хăвачĕ.

– Пирĕн çамрăксем ял хуçалăхĕнче те, вĕренӳпе культурăра та, производствăра та, медицина учрежденийĕсенче те, строительствăра та пурнăç уттинчен юлмасăр аталанаççĕ. Çамрăксене ытлă-çитлĕ ăс парса пурнăç çулĕ çине кăларассине, вĕсен аталанăвĕн пуçламăш утăмĕсенчех ял çыннин тата çĕр ĕçченĕн пурнăçне ăша хывассине хамăр ĕçĕмĕрте тĕп вырăнта тытатпăр. Нумай ачан ашшĕ-амăшĕ е аслăрах тăванĕ хамăр енре ырă ĕçпе сумлă ята тивĕçни – çамрăксемшĕн çирĕп тĕслĕх. Вĕсем тăван енпе, вырăнти ял хуçалăх предприятийĕпе тачă çыхăнура пулни эпир хамăр ĕçре пĕччен марри пирки калать. Ку вара пире малашлăха çирĕп пăхма май парать. Çамрăксен çирĕп пуçарăвĕсем, творчество утăмĕсем çĕнĕ проектсене пурнăçа кĕртме пулăшасси иккĕлентермест. Тĕллевсем лартма, ĕçлеме, тăван ен аталанăвĕшĕн тăрăшма ан ӳркенĕр çеç, – терĕ Çамрăксен кунĕпе саламласа район администрацийĕн пуçлăхĕ Ростислав Тимофеев.





Район центрĕнче çамрăксен уявĕ иртнĕ эрнекун, çĕртме уйăхĕн 29-мĕшĕнче, иртрĕ. Муркаш енре çамрăксен малашлăхĕшĕн калăпăшлă ĕçсем пурнăçлаççĕ. Вĕсемшĕнех хăтлă çуртсем çĕкленеççĕ, çĕнĕ çулсем хута каяççĕ, производство объекчĕсем уçăлаççĕ, çĕнĕ ĕç вырăнĕсем йĕркеленеççĕ, спорт лапамĕсем ĕçе кĕреççĕ. Çак ĕçсем самантлăха та чарăнса лармаççĕ. Пĕрлехи тăрăшулăхпа кăçал кăна çĕршыв хыснинчен районти çамрăксен пурнăç условийĕсене лайăхлатма 23,5 миллион тенкĕ уйăрма пăхнă. 20 миллионĕ хăйсен хуçисем патне çитнĕ те ĕнтĕ.

Мал туртăмлă çамрăксем уявра район администрацийĕн Хисеп грамотисемпе Тав çырăвĕсене, район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине, вăтам шкултан вĕренсе тухакансем ылтăн медальсене тивĕçрĕç. Нумайăшĕ район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн Тав çырăвне алла илни те тăрăшуллă яшсемпе хĕрсене туллин чыслани пулчĕ.

Уяв артистсен савăк ташши-юррипе, çамрăк ăстасен алă ĕç ăсталăхĕпе пуян пулчĕ.

**Сăн ӳкерчĕксенче: район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине тивĕçнĕ Аркадий Афанасьев (А. Афанасьева хресчен (фермер) хуçалăхĕ), «Сывлăх» спорт шкулĕн бассейнри инструкторĕ А. Барминова.**

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

01 асăрхаттарать

# Кăмака тата тимлĕх

Районти пушар хуралĕн оперативлă кăтартăвĕсем вут-кăвар ирĕке кайнă тĕслĕхсем йышланнине çирĕплетеççĕ. Пĕлтĕр утă уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне районта 18 пушар регистрациленĕччĕ пулсан, кăçал кунашкал инкеексем 23 тĕслĕхе çитрĕç. Иртнĕ çул ирĕке кайнă çулăм тыткăнĕнче 3 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлнăччĕ пулсан, 2018 çулта – 1.

Шăрăх çу кунĕсем пушар хăрушлăхне ӳстереççĕ кăна. Тимлĕхе пĕр самантлăха çухатсан каялла тавăрма çук инкек пырса кĕме пултарнине паян кашнин асра тытмалла. Кунта уйрăм сăмах – кăмакасем пирки. Кăçал уйрăмах мунча кăмакисем çине-çинех пушар сăлтавĕ пулса тăнăран килти хушма хуçалăхра мунча тытакансене унти кăмакасем тĕлĕшпе питех те тимлĕ пулма ыйтатăп.

Вуншар çул маларах пӳрт-çурт çавăрнă çынсен электрохуçалăх çине тимлĕх уйăрма вăхăт çитни пирки те юсавсăр электрохуçалăхран тухнă «хĕрлĕ автан» час-часах аса илтерет. Пулса тухнине тĕрĕс хак парса çак тĕллевпе районти пушар хурал ĕçченĕсемпе ирĕклĕ пушар хурал инспекторĕсем, ял тăрăхĕсен администрацийĕсенче ĕçлекенсем урлă ял çыннисемпе пушар хăрушсăрлăхĕпе ăнлантару ĕçĕсене анлăрах иртерессине тăрăшатпăр.

**Кĕске справка. Кăçалхи çур çулта юсавсăр кăмакасене пула районта тухнă пушарсен хисепĕ 10 тĕслĕхе çитрĕ. Танлаштарма, иртнĕ çул кун пек инкек 2 пулнăччĕ. Инкексен тепĕр сăлтавĕ вăл – кивĕ тата юсавсăр электрохуçалăх. Кăçал çак сăлтавсемпе пирĕн 7 хутчен, уçă çулăмпа асăрхануsăр пулнипе 5 хутчен çула тухма тиврĕ. «Хĕрлĕ автан» хуçаланнă объектсене илсен, тĕп вырăнта мунчасем (9), хушма хуралтăсем (7), пурăнмалли çуртсем (5) тăраççĕ.**

Çу кунĕсем çитнĕ май нумайăшĕ канма вăрмансене тухма кăмăллать. Кунта вара какай шӳрписĕр, техĕмлĕ шашлыксăр пулмастех. Республикăра пушарпа кĕрешес уйрăмах пĕлтерĕшлĕ тапхăр тăрать. Çавăнпа ял çыннисене кӳршĕри вăрмана тухса кăвайт чĕртессинчен, килти хушма хуçалăха тĕрлĕ çӳп-çап çунтарса тирпейленессинчен питĕ асăрханма ыйтатăп.

Çĕртме уйăхĕн 18-мĕшĕнче Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи Милютакассинче кивĕ электропроводкăран тухнă пушарта пурăнмалли çурта çеç сыхласа хăварма пултартăмăр.

Çĕртме уйăхĕн 28-мĕшĕнче ирлесе лаçра çӳп-çап çунтарнă чух çунакан вутта никам пăхмасăр пăрахса хăварнăран çулăм хуралтăсем çине куçнă. Ярославкăри ирĕклĕ пушар команди вăхăтра çитни тата вырăнти ял тăрăхĕ ял халăхне мотопомпа туянса пани çулăмпа кĕрешессине кая хăвармасăр пуçăнма май панă. Çапла вара пурăнмалли çурта сыхласа хăварма май килчĕ. Ял тăрăхĕ пушар хуралĕ çине тимлĕх уйăрнине çакăн пек мотопомпа Çĕмĕртлĕх Чемейĕнче те пурри, Нискассинче пушар машини ĕçе хатĕр ларни çирĕплетеççĕ.

Утă уйăхĕн 1-мĕшĕнче Уйкас Янасал ял тăрăхĕнчи Сосновкăра электропроводка юсавсăррине пула тухнă пушарта хушма хуçалăхăн пысăк пайне сыхласа хăвартăмăр. Кунта пушарпа кĕрешме «Свобода» тата Суворов яч. хис. хуçалăхсен вут-çулăмпа кĕрешекенĕсем çитни пысăк тĕкĕ пулнине те палăртса хăвармалла. Уйрăм тав – «Свобода» хуçалăха тата унăн ертӳçине Л. Петрова. Вĕсен пушар машини кирек хăш пушара та кĕске вăхăтра тухнипе тата çителĕклĕ пулăшу панипе палăрса тăрать.

**О. БАСКАКОВ,**
**патшалăх пушар надзорĕн районти пайĕн аслă инспекторĕ.**

Президент çырăвне алла илчĕ

# Йывăрлăхсене çĕннишĕн тав



Пурнăç саккăрла çаптарать теççĕ пулин те, ватлăх кунĕсенче ачисен, мăнукĕсен, тăванĕсен хӳттинче канлĕх тупнисен шăпи телейлĕ курăнать. 90 çул тултарнă Нина Иванова пирки те çапла калама пулать. Кăна Нина Константиновна хăй те пытармасть. «Паян юнашар çывăх çыннăмсем пулни, вĕсем хама хисеп туни-пулăшни, çĕршывпа район ертӳçисем эпир чăтса иртternине манманни чир-чĕре çĕнсех пурăнма хавхалантарать. Кун пек пулсан 100 çула та çитĕп-ха», – ăшшăн кулса калаçрĕ Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Вомпăкассинче пурăнаканскер.

Пурнăç пурăнасси – хир урлă каçасси мар. Ваттисен çак сăмахне эсир **сăн ӳкерчĕкре** куракан 90 çулхи асанне те калаçура пĕрре мар аса илчĕ. Юнкă ялĕнчи 4 ачаллă çирĕп хресчен çемйинче çуралса ӳснĕскер, çĕр ĕçне ашшĕпе амăшĕнчен вĕренсе икĕ пиччĕшĕпе тата аппăшĕпе мĕн пĕчĕкрен хăнăхса пынă. Йăлтах йĕркеллĕ пулмалла, анчах... Ашшĕне – ялти çирĕп хресчене – 1930 çулта репрессилеççĕ. 4 ачаллă амăшĕ ял çыннисем хута кĕнипе çеç пурăнмалли пӳртне харпăрлăхра сыхласа хăварать. Ытти вара... Çак йывăрлăха чĕтсе иртternĕ хĕрарăм мĕн пуррипе çырлахса ачисене ура çине тăратассине хăйĕн çирĕп тĕллевĕ туса хурать.

Кун-çул йĕркеленчĕ темелле, анчах... 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче пирĕн Тăван çĕршыва фашистла Германи çарĕсем сĕмсĕррĕн вăрçăпа тапăнаççĕ. Нинăн 20 тата 18 çулхи пиччĕшĕсем çийĕнчех фронта тухса каяççĕ. Вăрçă çулĕсемпе пиншер километр иртсе, Юнкă каччисем Çĕнтерӳ туса тăван киле орден-медальсемпе таврăнаççĕ.

Кунсерен мирлĕ пурнăç вăй илме пуçлать. Алла аттестат илнĕ хĕр те хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлас çул çине тăрать. Çапла вара Нина малтанах Шупашкарти медсестрасен курсĕнчен вĕренсе тухать. Унтан мал ĕмĕтлĕ хĕр Улатăрти фельдшер шкулне вĕренме кĕрет. Вăхăт иртсен çамрăк специалист хăйĕн ĕç ĕмĕрне Мăн Сĕнтĕр больницинче пуçлать. Пуçлать те 36 çул пĕр улшăнмасăр ĕçлет.

Вомпăкасси каччипе Николай Федорович Ивановпа çемье çавăрса икĕ ывăл çуратса ӳстерни (паян вĕсенчен пĕри пурăнать) – опытлă медицина сестрин пурнăçĕн пĕлтерĕшлĕ пайĕ. 6 мăнукпа 5 кĕçĕн мăнукĕ – асаннен паянхи телейĕ, тулли савăнăçĕ.

– Ырă шанчăкпа пурăнса хăварăн пурнăçăрта хура-шурне сирĕн самай курма тивнĕ. Анчах шăпа хăвăр ума кăларса тăратнă йывăрлăхсене эсир парăнман. Вĕсем вăхăтлăх пулнине ĕненсе ырă малашлăхпа пурăннă. Çакăншăн сире Раççей Федерацийĕн Президенчĕн Владимир Путинăн çырăвĕпе чыслатпăр, – терĕ тĕл пулура район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л. Тарасова. Ĕç ветеранне Мăн Сĕнтĕр больницинче паян ĕçлекенсен ячĕпе унăн ертӳçи Ю. Трофимов хаклă парне парса тав турĕ. **(Сăн ӳкерчĕкре – чыслав саманчĕ).**

– Пурнăçăр тулли пултăр, ĕçĕр ăнтăр, ĕмĕтĕрсем çитсе пыччăр. Сирĕн ĕçрен çамрăк ăру валли ырă ят юлтăр, – сĕнӳпе вĕçлерĕ калаçăва ĕç ветеранĕ.

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Çĕнĕлĕхсем**

# Водительсен юн анализне те тĕрĕслĕç

Малашне руль умне ÿсĕрле ларса çула тухакансене тупса палăртма алкотестерпа кăна усă курмĕç, юн анализне те тăвĕç. РФ Административлă право нормисене пăснин кодексне çакăн пек улшăну кĕртнĕ. Вăл июлĕн 2-мĕшĕнчен вăя кĕнĕ.

Ку таранччен инспекторсем тĕрĕслевре алкометрпа усă курнă. Халĕ вара водитель ÿсĕр пулнине условлă 1 литр юнра 0,3 г (е ытларах) этил спирчĕ пур чухне çирĕплетеççĕ. Ÿсĕр водителĕн яваплăхĕ çаплах юлать – 30 пин тенкĕ штраф тата 1,5 – 2 çуллăха транспортпа çÿрессинчен хăтарни.

# Ачасем маячокпа çула тухаççĕ

Июлĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ачасен ушкăнĕсене турттарассинче çĕнĕлĕхсем вăя кĕчĕç. Шкул автобусĕсен малашне сарă е сарă-хĕрлĕ тĕслĕ маячок пулмалла. Ку вăл çул çинче ытти транспорт умĕнче çăмăллăх памасть, анчах та иртсе çÿрекен транспорт водителĕсене тимлĕрех пулмаллине кăтартать.

Çавăн пекех шкул автобусĕн водителĕн «Д» категорипе ĕçленĕ стажĕ ачасене турттарма пуçличчен 1 çулталăкран кая мар тата таталман тапхăр пулмалла.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр инспекцийĕн районти уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

# Коммуналлă тÿлевсем те ÿсеççĕ

РФ Правительстви граждансем усă куракан коммуналлă услугăсен тÿлевĕн индексне çирĕплетнĕ.

Çапла Чăваш Енре уйрăм муниципалитетсенче июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа коммуналлă услугăсен тÿлевĕн индексĕ 6,2 процентран ытла ÿсмелле маррине палăртнă, çав вăхăтрах вăтам тÿлевĕн индексĕ 3,9 процентран ытла ÿсмелле мар.

Муркаш ял тăрăхĕнче пурăнакансен коммуналлă услугăсен (сивĕ шыв пыни, шыв юхса тухни, ăшă, электричество тивĕçтерĕвĕ, газ тивĕçтерĕвĕ) пулма пултаракан чи пысăк тÿлевĕн индексĕ 4,6 процентна танлашать. Ку 1160 çынна (ял тăрăхĕнче пурăнакансен 25,62 проценчĕ) пырса тивет. Çакă июлĕн 1-мĕшĕнчен тарифсем ÿснипе çыхăннă.

Çапах та Муркаш ял тăрăхĕнче пурăнакансен коммуналлă услугăсен тÿлевĕ вăтамран 3,64 процент чухлĕ кăна ÿсет.

Ытти пур ял тăрăхĕнче те тÿлев вăтамран 3,52 процентран пуçласа 3,7 процент чухлĕ ÿсет.

Çавăн пекех коммуналлă услугăсен тÿлевне саплаштарассипе субсиди илме май пуррине аса илтеретпĕр.

**Муркаш район администрацийĕн капиталлă строительство тата общество инфраструктурине аталантарассин пайĕ.**

**Пĕлме**

# Вăрттăн та пĕлтерме юрать

Хĕç-пăшалăн саккунсăр çаврăнăшне хирĕç кĕрешесси шалти ĕçсен пайĕшĕн яланах тĕп енсенчен пĕри шутланса тăрать, мĕншĕн тесен хĕç-пăшал çынсемшĕн ытла та пысăк хăрушлăх кăларса тăратма пултарать.

Саккунсăр çаврăнăшри хĕç-пăшала харпăр хăй ирĕкĕпе районти полици пайне пырса парсан вара уголовлă яваплăхран пăрăнма та, укçа хавхаланăвне тивĕçме те пулать. Тĕрлĕ хĕç-пăшалшăн хавхалантару тĕрлĕрен.

Регистрацилемен хĕç-пăшал, сирпĕнекен хутăш, сирпĕтекен тата çакна майлă ытти хатĕр упрани пирки информацие 8(83541)62-6-67 номерпе шăнкăравласа пĕлтерме пулать. Шăнкăрав вăрттăнлăхне тата хавхалантарăва шантаратпăр.

**Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕ.**


**Объявления / Пĕлтерÿсем**

**Продается однокомнатная квартира пл. 32,1 кв. м. в центре с. Моргауши. Тел. 8-903-389-49-93. 1-2.**

* * *

**КФХ «Сундырь» рулонти утă сутать. Тел. 8-987-760-57-71. 2-2.**

* * *

**Пилĕк уйăхри качака путеккисене сутатăп. Тел. 8-927-845-04-39.**

* * *

**Январьте пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел. 8-937-010-54-05.**

**Продаем ячмень, пшеницу – 7 руб. С доставкой – 8 руб. Тел. 8-927-843-52-40. 1-2.**

* * *

**Продаю гравмассу, речной песок, щебень до 5 тонн. Тел. 8-927-868-31-45, 8-906-387-56-77. 1-10.**

* * *

**Тюкланă утă сутатăп. Тел. 8-927-865-06-52.**

* * *

**Куплю бычков от месяца до 600 кг, коров, телок. Дорого. Тел. 8-937-952-33-80. 1-5.**

**Объявления / Пĕлтерÿсем**

**ПРОДАЮ: ПЕСОК, ОПГС (ГРАВМАССА), ПГС, ЩЕБЕНЬ, КЕРАМЗИТ и др.**
**ДОСТАВКА из с. МОРГАУШИ.**
**НЕДОРОГО. Тел. 8-927-862-42-44. 7-10.**

**КРОВЛЯ**
**ЛЮБОЙ СЛОЖНОСТИ**
**Работаем быстро: качественно, дешево. Поможем подобрать и доставить стройматериалы по низким ценам.**
**Цены ниже, чем на рынке.**
**КЛАДКА, ФУНДАМЕНТНЫЕ работы. Тел.: 8-905-342-00-70. 2-10.**

компания **немецкие ОКНА И ДВЕРИ**
рольставни • ворота • жалюзи
• замер • доставка (бесплатно)
• установка под ключ
всего от 3900 руб./м²
3-10
**8(927)844-78-11 · 68-78-01**

**КРОВЕЛЬНЫЕ, ФУНДАМЕНТНЫЕ РАБОТЫ.**
**Профнастил, черепица.**
**Тел. 8-905-341-24-39. 3-20.**

**ПРОДАЮ ЯЧМЕНЬ.**
**Тел. 8-903-064-83-44. 2-5.**

**«ОТДЕЛОЧНИК»**
**НЕДОРОГО:**
**ЦЕМЕНТ**
**ПРОФНАСТИЛ**
**УТЕПЛИТЕЛИ**
**ТРУБЫ Б/У**
**Тел. 8-961-348-66-36, 8-903-322-59-69. 2-10.**

**ЭЛЕКТРОПАСТУХИ**
**для КРС и других дом. животных.**
**Гарантия. Качество. Скидки.**
**Тел. 8-987-678-54-59, 8-937-390-37-72.**
**ООО «АГРОСФЕРА» 1-10.**

**Продаю кур, гусят, утят, мулардов, бройлеров, индюков. Бесплатная доставка. Тел. 8-909-300-08-18. 16-21.**

* * *

**Куплю скотину дорого: бычков, КОРОВ, телок, ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Тел. 8-961-346-19-79. 17-17.**

* * *

**КУПЛЮ КОРОВ И БЫЧКОВ. ВЫНУЖДЕННЫЙ ЗАБОЙ. Купим и больных. Тел. 8-927-851-27-77. 13-17.**

* * *

**Продаю: Гравмассу. Бой кирпича. Песок. Щебень. Доставка. Тел. 8-905-028-22-25. 4-10.**

* * *

**ПЕСОК КАРЬЕРНЫЙ, РЕЧНОЙ, ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ, БОЙ КИРПИЧА, ГРУНТ, НАВОЗ и.т.д. Доставка по Моргаушскому району от 1 до 20 тонн. НЕДОРОГО. Тел. 8-905-345-96-62. 3-10.**

* * *

**Продаю мелкий и продовольственный картофель. Тел. 8-961-338-21-08.**

**ОКНА, ДВЕРИ, ПОТОЛКИ.**
**Тел. 8-962-599-65-62** 2-10.

**Продаем пиломатериалы обрезные, кровельные 25 мм, половые 50 мм, брус любого размера; цемент. Доставка бесплатно. Цена договорная. Тел. 8-903-346-40-58, 8-927-996-16-52. 8-10.**

**ПРОДАЕМ: керамзитобетонные блоки, кирпичи, цемент, песок, гравмассу. УСЛУГИ манипулятора, самосвала. Тел. 8-960-307-41-78. 17-25.**

**Продаю ГРАВМАССУ, ПЕСОК.**
**Тел. 8-905-199-69-33. 17-30.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Цена договорная. Доставка по району бесплатно. Тел. 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 10-10.**

**НАТЯЖНЫЕ ПОТОЛКИ**
**Тел. 8-927-667-40-92. 47-48.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ.**
**Доставка. Тел. 8-919-650-96-68. 8-8.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ.**
**Доставка. Тел. 8-903-389-94-76. 8-8.**

**Продаю: ПЕСОК, ГРАВМАССУ, ЩЕБЕНЬ. Доставка.**
**Тел. 8-903-065-60-58. 9-44.**

**Продаю ДЕШЕВО асфальтную крошку, щебень (ОПГС), гравмассу, песок, бой кирпича, чернозем, торф, навоз. Доставка. Тел. 8-961-347-25-47. 5-14.**

* * *

**Фундамент, кирпичная кладка, кровля любой сложности. Деревянные дома и бани, отделка домов сайдингом. Металлочерепица, профлист, сайдинг по низким ценам. Проект, смета бесплатно. Тел. 8-987-670-56-78. 9-10.**

* * *

**ОАО «Ядринмолоко» приглашает на постоянную работу главного инженера, з/п по результатам собеседования. Трудоустройство по ТК, полный соц. пакет. Тел. 8-962-321-04-76. 2-2.**

* * *

**Организации требуется егерь. Трудоустройство по ТК, полный соц. пакет. Тел. 8-962-321-04-76. 2-2.**

* * *

**Заборы, ворота, навесы, палисадники самых разных видов из профнастила, евроштакетника, сетки-рабицы. Надежно, быстро, дешево. Тел. 8-937-942-87-85. 1-10.**


**ТАВ ТĂВАТПĂР**

Москакасси ялĕнче пурăннă ĕçпе вăрçă ветеранне Петр Иванович Живойкина юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн йывăр хуйха пирĕнпе пайланăшăн тăвансене, Муркаш район администрацине, военкомат коллективне, Москакасси ял тăрăхĕн администрацине, Москакасси шкулĕн ĕçченĕсене, ял-йыша, кÿршĕсене, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Мăшăрĕ, ачисем.**

* * *

Юнкă ялĕнче пурăннă, «Новая Юнга» хуçалăхра нумай çул бухгалтерта ĕçленĕ Людмила Лукинична Толстовăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăван-хурăнташа, пускилсене, ял-йыша, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Толстовсен, Тепеевсен çемйисем.**

* * *

Шупуç ялĕнче çуралса ÿснĕ, унта пурăннă Екатерина Федоровна Овчинниковăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, йывăр хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн тăвансене, ял-йыша, пускилсене, унта пынă мĕнпур çынна чĕререн тав тăватпăр.

**Хĕрĕпе унăн çемйи.**

Муркашри «Путене» ача сачĕн коллективĕ кунта нумай çул повара ĕçлекен Р.П. Бубнован мăшăрĕ

**Алексей Илларионович**
**БУБНОВ**

вилсе кайнă пирки тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

Турайри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта историпе обществознани предмечĕсене вĕрентекен И.Н. Иванован

**АМĂШĔ**

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата тăванĕсемпе пĕрле тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

**Прогноз погоды**

| | Среда | | | | Четверг | | | | Пятница | | | | Суббота | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 | 03 | 09 | 15 | 21 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Явления погоды | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура | +18 | +22 | +23 | +18 | +16 | +19 | +21 | +16 | +14 | +21 | +23 | +19 | +16 | +23 | +24 | +20 |
| Давление | 742 | 742 | 741 | 741 | 740 | 740 | 740 | 740 | 740 | 741 | 740 | 741 | 740 | 740 | 739 | 739 |
| Ветер | 3 | 5 | 6 | 3 | 3 | 5 | 5 | 2 | 3 | 5 | 5 | 3 | 2 | 4 | 5 | 3 |
| Порывы | 7 | 9 | 12 | 8 | | 10 | 11 | 7 | | 10 | 12 | | | 9 | 11 | 6 |
| Направление | С-З | З | Ю-З | З | Ю | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-З | Ю-В | Ю | Ю | Ю-З | Ю |


**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
**Чăваш Республикин Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви**
**ЧР Информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерствин “Муркаш районĕн «Çĕнтерÿ ялавĕ» хаçат редакцийĕ” Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ.**

**Тĕп редакторшăн Н.Н. НИКОЛАЕВА**

**Редакципе издатель адресĕ: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.**
**Телефонсем: тĕп редактор - 62-1-36, бухгалтери - 62-1-35,**
**пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕсем - 62-1-38.**
**Факс: 62-1-36. E-mail: smi24@cap.ru, smi24-1@cap.ru, redaction@cbx.ru**

**Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2012 çулхи юпа уйăхĕн 11-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00249 № регистрациленĕ.**

**Калăпăшĕ 1 пичет листи.**
**Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.**
**Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.**
**Р– реклама материалĕ.**

**ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.**
**Хаçат юнкунсерен тата шăматкунсерен тухать.**
**Номер дежурнăйĕ Р.А. Макарова.**
**Пичете панă 03.07.2018 ç.**
**Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.**
**Заказ Тираж 4323**

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерÿ ялавĕ», отпечатан в типографии АО «ИПК «Чувашия»: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.